26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
АВГУСТ
29
ВЫРСАРНИКУН
172(6409) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем

Ыран, августăн 30-мĕшĕнче, совет халăхĕ стахановла юхăм пуçланнăранпа сакăр çул çитнине паллă тăвать.

Стахановла юхăмăн саккărмĕш çулĕ совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пыракан хаяр кĕрешӳре пысăк çĕнтерӳсем тунипе паллă пулса тăрать. Пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕçсен çуллахи наступленине пĕтерсе тăкнă хыççăн паттăррăн наступлени туса пырать. Тылра пур çĕрте те Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники, хĕçпăшалсем, апат-çимĕç тулăх парса тăрассишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту вăйлăн çĕкленсе пырать. Çак ăмăртăва миллионшар рабочисемпе колхозниксем тата инженерла-техникла работниксем хутшăннă. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура стахановецсен çарĕ кунсерен ӳсет.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малта пыракансем—вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсем кУ таринччен пухнă опытсемпе туллин усă курасçĕ кăна мар, вăл опытсене пуянлатса пыраççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерме çĕнĕ майсем шыраса тупаççĕ. Стахановец—совет çĕршывĕн çулăмлă патриочĕ. Вăл тунă ӳсĕмсемпе тата хăй кăна тухăçлăн ĕçленипе çырлахмасть, хăйĕн примерĕпе ыттисене вĕрентет. Промышленноçра халĕ производствăна поточнăй методпа организацилесси сарăлса пырать. Ку вăл ĕç тухăçлăхне çĕклеме май парать.

Мухтавлă стахановла юхăмăн паха çимĕçĕсене халăх хуçалăхĕн пур отраçлисенче те ытларах та ытларах куратпăр. Республикăри промышленность кăçал çурçулти плана ирттерсе тултарчĕ. Нумай предприятисем плана тултараççĕ кăна мар, планран ирттерсе çĕршер пин тенкĕлĕх продукци параççĕ. Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти вырăна тухса, ВЦÇПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулнă. Завод август уйăхĕнче те лайăх ĕçлет, уйăхри плана срокчен тултарнă. Главнăй инженер пулса Якунин юлташ ĕçлекен завод виçĕ уйăх хушши ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тытса тăрать. Кун пек предприятисем сахал мар. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата ялхуçалăх ĕçĕсем енĕпе лайăх ĕçленĕшĕн пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме кандидата тăратнă.

Халĕ Хĕрлĕ Çар паттăррăн наступлени туса пынипе хавхаланнă рабочисемпе инженерла-техникла работниксем çулталăкри плана срокчен тултарса продукци ытларах парассишĕн, колхозниксемпе колхозницăсем уборка ĕçĕсене лайăх пахалăхпа вĕçлессишĕн вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Çак кĕрешӳре стахановецсем малти вырăнта. Главнăй инженер пулса Якунин юлташ ĕçлекен заводри стахановецсем Маковская тата Димитренко юлташсем виçĕ норма тултараççĕ. Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец Кривцов тăватă норма, Абрамов виçĕ норма парать. Етĕрне МТС-ĕнчи комбайнер Москалан юлташ комбайнпа кашни кун 10—15 гектар тырă пуçтарса кĕртет. Кун пек фактсем çĕршерĕн, пиншерĕн илсе кăтартма пулать.

Отечественнăй аслă вăрçă халăх хуçалăхĕ умне çĕнĕ те пысăк задачăсем лартать. Вăл задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пирĕн стахановла юхăма вăйлатса пымалла. Стахановецсен паха опычĕсемпе ĕçлеме пĕтĕм рабочисене вĕрентмелле. Предприятисенче халĕ производствăна тин çеç пынă çамрăксем тата хĕрарăмсем сахал мар. Вĕсене техникăна вĕрентмелле, вĕсем валли стахановла ĕçлеме условисем туса памалла.

Предприятисен руководителĕсемпе колхоз председателĕсен, партипе совет организацисен стахановецсен пуçарăвне куллен сарса пымалла. Производствăна поточнăй методпа организацилесси çине хытă çаврăнса пăхмалла.

Хĕллехи вăхăтра тухăçлăн ĕçлес тесен, предприятисемпе промартельсене тата транспорта хĕллене халех хатĕрлемелле. Предприятисен транспортне, производство тата пурăнмалли çурчĕсене юсамалла, хĕле валли çунтармалли япаласем, чĕртавар запасĕ хатĕрлес пулать. Рабочисен пурнăçпа йăла условисене лайăхлатма мĕн кирлисене пурне те тумалла.

Хамăрăн пĕтĕм вăйсене пĕтĕçтерсе, фронт валли вăрçă техники, хĕçпăшалсем тата апат-çимĕçсем кирлĕ чухлĕ парса тăрар, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту ялавне çӳлерех çĕклер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 27 мĕшĕнче пирĕн ХАРЬКОВРАН хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 6 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. КОТЕЛЬНА район центрне, темиçе хутчен аларак-алла куçнăскерне, пирĕн çарсем çĕнĕрен йышăнса илнĕ.

БРЯНСКРАН кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан 20 пункта ытла, вăл шутра СЕВСК хулине, йышăнса илнĕ.

Донбасра, ВОРОШИЛОВГРАДРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра, пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн çарсем çапăçса разведка тунă.

Августăн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 63 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 61 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Харьковран хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче пĕр полка çити нимĕç пехотине пĕтерсе тăкнă. Пĕр соединени боецĕсем Ахтырка хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре виçĕ кун хушши пынă çапăçусенче нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, 76 танк, 13 бронемашина тата 20 тупă персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тăшмантан 16 танк, 27 бронемашина, чугунçул çинчи 4 эшелона, 2 продовольстви складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Харьковран кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин хаяр контратакисене сире-сире янă. Кун каçиччен пынă çапăçусенче нимĕçсен 23 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă, тăшман çыннисене нумай вĕлернĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре совет боецĕсемпе офицерĕсем паттăрлăхпа геройлăх кăтартаççĕ. Руцкий старши сержантăн тупă расчечĕ пĕр çапăçура нимĕçсен 2 танкне пĕтерсе тăкнă тата темиçе вунă автоматчика вĕлернĕ. Данильян капитанăн подразделенийĕнчи боецсен ушкăнĕ нимĕçсен хăй тĕллĕн çӳрекен «Фердинанд» йышши туппи патне курăнмасăр пырса çитнĕ. Çав тупă пирĕн çапăçури ретсене персе тăнă. Боецсем тупă урапине персе çĕмĕрнĕ те туппине тытса илнĕ. Дмитриев лейтенант танкĕн экипажĕ халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен 2 танкне, 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлернĕ.

* * *

Брянскран кăнтăртарахри районра пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла, вăл шутра Севск хулине, йышăнса илнĕ.

Севск хулине совет войскисем хуларан çурçĕртерехрен тата кăнтăртарахран тапăнма пуçланă. Артиллери тата авиаци вăйлăн персе хатĕрленĕ хыççăн пирĕн чаçсем нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçнă. Çав вăхăтрах тепĕр соединени боецĕсем хулана хĕвелтухăçĕнчен атакăланă. Тăшман пирĕн пехота, артиллери тата танксем пырса çапнине чăтайман. Хаяр çапăçусем хыççăн совет чаçĕсем Севск хулине йышăнса илнĕ. Хулашăн пынă çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 5.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. 700 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци малалла тапăнса пыракан çĕр çинчи çарсене активлăн пулăшса тăрать. Кун каçиччен пирĕн самолетсем тăшманăн войскисемпе позицийĕсене виçĕ хутчен вăйлăн пырса çапнă. Авиаци пыра-пыра çапнипе нимĕçсем йывăр çухатусем тӳснĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 26 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Донбасра, Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем ăнăçлăн малалла куçса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем 800 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 2 танк, 11 тупă, 34 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче нимĕç пехоти пирĕн позицисене атакăланă. Совет боецĕсем пеме пуçланă та гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче пирĕннисем нимĕçсен пăрахса хăварнă 8 пулеметне, гранатометне тата ытти хĕçпăшалĕсене те тупса пуçтарнă. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ пунктне тапăннă, нимĕçсен 60 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, пĕчĕк калибрлă 11 тупă тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ нимĕçсен 3.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне тата тăшманăн хуралта çӳрекен карапне шыва путарнă.

* * *

Нимĕçсен «Мессершмитт—109» йышши самолечĕ Харьков облаçĕнче фронт çывăхĕнчи «Красная волна» совхоз хирне анса ларнă. Совхоз бригадирĕ Иван Семенович Зелинский нимĕç летчикне хĕçпăшалсăрлантарнă та темиçе рабочипе çав летчика совет чаçĕн штабне çитерсе пама хушнă. Çав вăхăтра нимĕçсен тепĕр летчикĕ хирте хĕçпăшалсăр штатски çынсем кăна çӳренине курса, çав тĕлех анса ларнă. Нимĕç летчикĕ Зелинские пистолетпа пенĕ, анчах тивертеймен. Совет патриочĕ ăнăçлăн çапса ярса гитлеровец аллинчи пистолета çĕре ӳкернĕ те летчика тытса чарнă. Икĕ нимĕç летчикне те чупса çитнĕ красноармеецсен аллине панă. Нимĕçсен пĕтĕмĕшпех юсавлă самолечĕсене те совет авиаци чаçне панă.

* * *

Витебск тата Вилейка облаçĕсенчи районсенче кĕрешекен белорусс партизанĕсен темиçе отрячĕ тăшман çулйĕрĕсене темиçе тĕлте ăнăçлăн çĕмĕрсе тухнă. Чугун çул çинче тата шоссе çулĕ çинче темиçе кĕпере сирпĕнтерсе янă. Пысăк чугун çул станцинче партизансем станцие кĕртекен тата станцирен кăларса яракан пур стрелкăсене те, семафора тата тĕрлĕ çар грузĕпе тăнă эшелона пĕтерсе тăкнă. Тепĕр чугун çул станцинче нимĕçсен горючи, боеприпассем, продовольстви тата выльăх апачĕ усракан çар склачĕсене çунтарса янă. Тăшманăн 147 салтакне тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Полесье облаçĕнче кĕрешекен Ворошилов ячĕпе тăракан отрядри партизансем пĕр чугун çул станцине сыхлакан хурала тапăннă. Ĕç сасартăк пулнипе нимĕçсем хăраса ӳкнĕ те тарса саланнă. Совет патриочĕсем 142 салтакпа офицера тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн подразделенисем нимĕçсен 116-мĕш гренадерски полкĕнчи батальонăн штабне аркатса тăкнă. Штабăн тытса илнĕ докуменчĕсем хушшинче 116-мĕш полк командирĕн—Эбб полковникăн приказне тупнă. Приказра партизансемпе кĕрешесси çинчен çырнă. Унта çапла каланă: «Вăрманлă районсенче партизансен ĕçĕ вăйлăн ӳссе кайрĕ. Партизансен тĕп пайĕ вырăнти çынсенчен тăрать. Партизансем çар командирĕсемпе çар обозĕсене тапăнаççĕ. Нимĕç çарĕнчи салтаксемпе офицерсем пĕр хыпарсăр çухалаççĕ. Кӳршĕри дивизире хăйсен чаçне выльăх апачĕ таратакан команда каялла таврăнман. Тепĕр соединенире 20 салтак хăйсен командирне вĕлернĕ те партизансем патне тарнă». Çак ĕçсенчен хăраса ӳкнĕ нимĕç полковникĕ çав приказпа хăйĕн подразделенийĕсене малашне обозсене вăйлă хуралпа кăна сӳретме хушать.

* * *

Нимĕçсен 19-мĕш танковăй дивизийĕнчи бронемашинăсен взвочĕн тыткăна лекнĕ командирĕ лейтенант Куртлоттергус çапла каласа панă: «19-мĕш танковăй дивизи нимĕç çарĕнче чи лайăх дивизисенчен пĕри шутланса тăнă. Çавăнпа та, Белгород районĕнче вырăссем пирĕн дивизие темиçе кун хушшинчех аркатса тăксан, эпир пурте хăраса хытса кайрăмăр. Дивизин çĕтĕк-çатăк юлашкийĕсене васкаса çывăхри тыла ячĕç, анчах та пире кунта та хамăра йĕркене кĕртмелĕх çителĕклĕ вăхăт памарĕç, каллех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Грайворонран хĕвелтухăçнерехре пире вырăссем çавăрса илчĕç. Бронемашинăсен экипажĕсем нумайĕшĕ хăйсен техникине пăрахса тарса çухалчĕç. Малалла татах та хирĕç тăни пирĕншĕн текех усăсăр пулса тăчĕ. Эпĕ хам экипажсене хĕçпăшала пăрахса тыткăна парăнма хушрăм».

И. С. Конева тата М. М. Попова çар званийĕ—Арми генералĕн званине парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулхи майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх тунă çар званине—Арми генералĕн званине çаксене парас: Иван Степанович Конева Маркиян Михайлович Попова.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **И. СТАЛИН.**

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ **Я. ЧАДАЕВ.**

Мускав, Кремль. 1943 çулхи августăн 26-мĕшĕ

Пирĕн авиаци Полтава, Краматорская чугун çул узелĕсене тата тăшман аэродромĕсене тапăнни

Августăн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци нимĕçсен Полтава тата Краматорская чугун çул узелĕсенче тăнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пулла пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Çав каçах пирĕн авиаци нимĕç самолечĕсем нумайăн пĕр çĕре пухăнса тăнă аэродромсене тапăннă. Самолетсем тăракан вырăнсенче бомбăсем çурăла-çурăла кайнине асăрханă. Пĕр аэродромра питĕ вăйлă взрыв пулнă. Взрыв хыççăн нумай тĕлте пушарсем тухнă.

Пирĕн авиацин пысăк пайĕсем Харьковран кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен çарĕсемпе танкĕсем тата автомашинисем пухăнса тăнă вырăнсене çаплах пыра-пыра çапнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсене таврăннă.

Оборона Халăх Комиссариатĕнчен

Изюм хули районĕнче боевой постра танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕ Петр Васильевич **Волох** вилнĕ. ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени тăрăх, Волох юлташăн ячĕ ĕмĕре пытăр тесе, Изюм хулинче унăн ячĕпе памятник лартаççĕ, Саратоври 2-мĕш танковăй училищĕне унăн ятне параççĕ тата Энгельс хулинчи (Волох юлташ çуралнă хула) пĕр урама Волох юлташ ятне параççĕ.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсем

ССР Союзĕн Наркомземĕ, колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатассишĕн районсем хушшинче пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсене пăхса тухса, ăмăрту условийĕсем тăрăх, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçăн паракан премие илмелли кандидатсем тесе Пĕтĕм Союзри 105 районa палăртнă, вĕсем 1943 çулхи малтанхи çурçулта выльăх-чĕрлĕх хисепне ӳстерес тĕлĕшпе чи лайăх результатсем панă тата государствăн çураки планне ирттерсе тултарнă. Çав районсем хушшинче Чăваш республикин çак районĕсем пур:

- Элĕк районĕ
- Вăрнар районĕ
- Калинински район
- Сĕнтĕр районĕ
- Шупашкар районĕ
- Шăхасан районĕ.

Пирĕн ĕç—тăшман пуçне хĕç

Харьков хулине ирĕке кăларакансене мухтав!

ЧКАЛОВСКОЕ. (Телефонпа). Хĕрлĕ Çарăн татах тепĕр пысăк çĕнтерӳвĕ пĕтĕм халăха чĕререн савăнтарчĕ. Сталин юлташ Харьков хулине ирĕке кăларнă войскăсене саламласа панă приказа эпир çийĕнчех районри колхозниксем патне çитертĕмĕр. Колхозниксем тырпулсене пухса кĕртес тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме тытăнчĕç.

Нариман, Киров, Ворошилов ячĕсемпе тăракан колхозсем тырра талăкĕпех выраççĕ. Киров ячĕпе тăракан колхозри агитатор Табакова 50 тĕм çыхас вырăнне 240-шер тĕм çыхать. Каçхине ĕçлекен бригада нормăна 150—160 процент тултарать. «Кзыл-тан» колхозри вăрçă инваличĕ Фейзуллин ертсе пыракан бригада çак кунсенче хĕрлĕ обоз организацилесе государствăна тырă парса татрĕ. Халĕ унти колхозниксем кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ,
ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Тырă вырса пĕтернĕ колхозсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çар Харьков хулине нимĕç вăрă-хурахĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнишĕн савăнса, районри ĕççыннисем хăйсен фонт умĕнчи тивĕçлĕхне тата ытларах туйса ĕçлеме пуçларĕç. Медикасси ялсоветĕнчи «Трактор», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем, Тĕрер ялсоветĕнчи «Красная Чувашия», «Правда», «Калиновка», Типçырма ялсоветĕнчи «Чамыш», «Трудовик» колхозсем çуртыррисене районра чи малтан вырса пĕтерчĕç.

Харьков хулине ирĕке кăларнă Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă дивизийĕсен ячĕпе колхозсем нумай лавлă хĕрлĕ обозсемпе государствăна тырă леçеççĕ. «Янмурзино» колхоз 50 лавпа, «Победа» колхоз 13 лавпа хатĕрлев пункчĕсене тырă леçрĕç. «Чамыш». «Буксир» колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. Çак колхозсене районри «Хисеп хăми» çине кĕртнĕ.

Малта пыракан колхозсем çĕрле те кĕлте кӳреççĕ, авăн çапаççĕ. «Победа» колхоз ыраш кĕлтисене капана хывса пĕтерчĕ, 60 гектар тыррине сапса кĕртрĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Харьков хулине ирĕке кăларнă

Пирĕн республикăри пĕр заводри комсомолецсем Сталинграда оборудованисем памалли заказа срокчен пурнăçлана

Атăлăн çирĕп крепосĕ — геройла Сталинград—нимĕç ирсĕрĕсем кӳнĕ сурансенчен хăтăлса пырать. Сталинграда юсама Чăваш республикинчен кайнă çĕршер çамрăксем унта хăйсен пултарулăхĕпе ĕçченлĕхне кăтартса ĕçлеççĕ. Шупашкар комсомолецĕсем Костя Птухин, Вадим Пельцих, Лев Чугунов—кĕске вăхăтрах чаплă бетонщиксем пулса тăчĕç. Вĕсен стахановла бригадин ĕçне часах пĕтĕм çĕршыв пĕлчĕ.

Кунсăр пуçне пирĕн республикăри хăшпĕр предприятисем Сталинграда оборудованисем парса тăрас тĕлĕшпе те мухтава тивĕçлĕ ĕçлеççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ Сталинграда юсама оборудованисем парса тăрас тĕлĕшпе заводсенчи комсомол организацисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртуне пуçарнă. Комсомол комитечĕн секретарĕ пулса З. Бродоцкая юлташ ĕçлекен заводри комсомолецсемпе çамрăксем, çав ăмăртăва хутшăнса, Сталинград заказĕсене пурнăçлама пулнă.

Социализмлă ăмăрту лайăх результатсем пачĕ: завод коллективне кăçалхи виççĕмĕшпе тăваттăмĕш кварталсенче панă заказа пĕр уйăх хушшинчех—июлĕн 30-мĕшĕнче ăнăçлăн пурнăçланă, Сталинграда çĕршер оборудовани пиллĕк уйăх маларах тиесе ăсатнă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ Сталинграда оборудованисем парса тăрас тĕлĕшпе комсомол организацисем хушшинче пынă Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухнă. Çав заводри комсомол организацийĕ Пĕтĕм Союзри пĕррремĕш вырăна тухнине палăртнă, ăна пĕррремĕш преми—10.000 тенкĕ укçа панă.

Заводри комсомолецсем ку хыпара пирĕн паттăр войскăсем Харьков хулине ирĕке кăларнă вăхăтра илчĕç. Заводра пулса иртнĕ митингсенче комсомолецсемпе çамрăксем Сталинград заказĕсене пурнăçлас ĕçе малашне те ăнăçлăн туса пыма, пур заказсене те срокчен пурнăçлама сăмах пачĕç. Федицына, Цыкова тата ытти юлташсем ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригадисем комсомол 25 çул тултарнă ятпа стахановла вахтăна тăчĕç.

Учительсен конференцийĕсем

Вĕренӳ çулĕ пуçланать, анчах хатĕрленӳ ĕçĕсене вĕçлемен-ха

Августăн 25-мĕшпе 26-мĕш кунĕсенче Шупашкарти шкулсен кĕçĕн класĕсенче вĕрентекен учительсен конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта 1942—43-мĕш вĕренӳ çулĕн итогĕсемпе çĕнĕ вĕренӳ çулĕн задачисем çинчен хулари çутĕç пайĕн заведующийĕ А. Кириллова юлташ доклад туса пачĕ.

Хулари шкулсем иртнĕ вĕренӳ çулĕнче партипе правительство шкулсем умне лартнă задачăсене начар мар пурнăçласа пычĕç. Вăрçăн йывăр условийĕсенче ĕçленĕ пулин те, шкул ачисем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси тата отличниксен йышĕ самаях ӳснĕ. Сахал мар шкулсен коллективĕсем, уйрăм учительсемпе классен руководителĕсем ачасене тарăн пĕлӳ тата коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Кĕçĕн классенче вĕрентекен учительсенчен уйрăмах Железкова, Кукинская, Тараканова, Кудрявцева, Краснощекова, Панишева, Селезнева т. ыт. юлташсем примерлă ĕçленĕ.

Докладчик, çавăн пекех пренире тухса калакансем те, хулари шкулсен ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен те чарăнса тăчĕç. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче хулара шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве явăçтарайман. 10-мĕш номерлĕ шкулта 24 ача, 2-мĕш номерлĕ шкулта 12 ача шкула çӳремен.

Хăшпĕр классенче (5-мĕш номерлĕ шкулти 1-мĕш класра—учительница Ефимова, 15 мĕш номерлĕ шкулти IV-мĕш класра—учитель Белов) ачасене тарăн пĕлӳ парайман. Çак классенче ĕçленĕ учительсем хăйсен педагогикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе сӳрĕк ĕçленĕ.

Пренире тухса калакансем хулари шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне начар хатĕрленнине палăртрĕç. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне пĕр шкул та ремонт ĕçне пуçăнман. Шкулсене хĕл каçма кирлĕ вутта 15 процент кăна турттарса килнĕ. Пĕррремĕш номерлĕ вăтам шкул кăна 120 кубометр вутă хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ.

Иртнĕ çул пионерсем хушшинче ĕçлесси тивĕçлĕ вырăнта пулман. 2-мĕшпе 3-мĕш номерлĕ шкулсенче аслă пионер вожатăйĕсем вуçех пулман, халĕ те çук. 2-мĕшпе 5-мĕш номерлĕ шкулсенчи аслă пионер вожатăйĕсем начар ĕçлеççĕ. ВЛКСМ горкомĕ пионер организацисен ĕçĕпе сахал интересленет. Çакна чăваш шкулĕнче пионер вожатăйĕ пулса ĕçлеме чăвашла пĕлмен работнике уйăрни те уççăн çирĕплетсе парать.

Конференци ĕçĕсене Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров, ВКП(б) горкомĕн секретарĕ Федоров юлташсем хутшăнчĕç.

Конференци йышăннă резолюцире вĕренӳ çулĕ пуçланиччен юлнă вăхăтăн кашни сехечĕпе усă курса, хатĕрленӳ ĕçĕсене туса çитерме, ĕçри мĕнпур çитменлĕхсене пĕтерме хушнă.

З. МИТРОФАНОВА.

Уборкăри çĕнтерӳ фронтри çĕнтерӳпе пĕрех

Уйхирте вăя хĕрхенмесĕр ĕçлер, малалла тапăнса пыракан Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса пулăшар

ЧАВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇСЕМ АВГУСТĂН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тыр. вырни	Капана хывни	Ăйăп çапни
Куславкка	95,4	26,1	17,1
Шăмăршă	95,4	37,1	12,8
Шупашкар	94,8	28,0	16,5
Вăрмар	94,6	17,8	15,1
Сĕнтĕрвăрри	93,2	23,3	18,6
Хĕрлĕ Чутай	93,0	37,8	22,1
Элĕк	91,9	23,4	9,7
Çĕрпӳ	90,3	33,7	22,3
Сĕнтĕр	90,0	25,7	11,5
Ишлей	88,1	20,7	15,9
Советски	87,7	19,1	8,3
Елчĕк	87,5	40,4	12,7
Октябрьски	86,7	22,5	15,9
Етĕрне	86,4	36,1	20,2
Вăрнар	86,0	34,9	16,1
Тăвай	83,7	17,4	9,7
Калинино	83,2	18,3	9,5
Красноармейски	83,1	31,5	18,7
Йĕпреç	81,1	32,8	21,9
Канаш	80,5	17,7	11,8
Комсомольски	79,5	16,1	10,1
Çĕмĕрле	79,4	35,5	21,3
Шăхасан	79,3	21,5	9,7
Чкаловски	74,5	13,5	10,6
Первомайски	74,3	17,1	12,7
Улатăр	66,5	67,9	23,9
Пăрачкав	60,0	38,1	10,4
Кувакино	53,7	34,3	19,5
Шупашкар хули	95,8	29,6	12,0
ЧАССР тăрăх	83,9	27,7	14,9
Августăн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	74,7	27,6	13,5

ЧАВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРАКИ ĔÇЕ АВГУСТĂН 25-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тырăсем акни
Сĕнтĕр	69,5
Красноармейски	68,6
Ишлей	67,8
Елчĕк	65,9
Шăхасан	56,6
Йĕпреç	56,1
Çĕрпӳ	56,1
Калинино	51,2
Вăрнар	49,9
Тăвай	49,4
Етĕрне	47,7
Шупашкар	46,3
Чкаловски	46,0
Октябрьски	45,7
Сĕнтĕрвăрри	43,2
Шăмăршă	42,6
Элĕк	42,0
Вăрмар	41,3
Первомайски	40,0
Советски	39,0
Комсомольски	38,3
Канаш	38,1
Хĕрлĕ Чутай	35,5
Çĕмĕрле	31,5
Куславкка	29,3
Пăрачкав	27,6
Улатăр	26,4
Кувакино	26,0
Шупашкар хули	52,5
ЧАССР тăрăх	47,1
Августăн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	25,0

Етĕрне МТС-ĕ комбайнпа тырă вырмалли плана тултарчĕ

ЕТĔРНЕ, августăн 28-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Хĕрлĕ Çар Украинăн икĕмĕш столицине—Харькова ирĕке кăларнипе хавхаланса, пирĕн МТС-ри комбайнерсем сталинла вахтăна тăчĕç. Комбайнер Москалан юлташ августăн 24-мĕшĕнче комбайнпа 15 гектар тырă вырса пухрĕ. Юлашки виçĕ кун хушшинче кăна вăл 45 гектар тырă вырчĕ. Çавăн пекех Токсубаев, Смирнов тата ытти комбайнерсем те ик-виçĕ хут хăвăртрах ĕçлеме тытăнчĕç.

МТС августăн 27-мĕшĕ тĕлне хăйĕн комбайнĕсемпе пурĕ 682 гектар çинчи тырра вырса, комбайнпа тырă вырмалли çулталăк планне 113 процент пурнăçларĕ. Токсубаев юлташ хăйĕн комбайнĕпе 138 гектар тырă вырса пухнă, планпа 80 гектар вырмалла пулнă.

П. ПЕРЛОВИЧ,
Етĕрне МТС директорĕ.

Комбайнпа тырă вырмалли çулталăкри плана тултарнă

ШАМАРША, августăн 28-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Паян пирĕн МТС комбайнсемпе тырă вырмалли çулталăкри плана пурнăçларĕ. Комбайнсемпе пурĕ 1340 гектар вырса пухнă, планпа 1320 гектар вырмаллаччĕ.

МТС-ăн пур комбайнерĕсем те кăçал пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Комбайнпа тырă вырас ĕçĕн мастерĕ В. Фадеев икĕ комбайнпа ĕçлет. Фадеев юлташ хăйĕн икĕ помощникĕпе—Тамара Груздева тата Яков Иофе юлташсемпе пĕрле августăн 28-мĕшĕ тĕлне 340 гектар çинчи тырра вырса пухрĕ, 700 килограмм ытла горючи перекетлесе хăварчĕ. Фадеев юлташăн комбайнĕсем халĕ те ĕçлеççĕ. Вăл кăçал 700 гектар вырма пулса илнĕ обязательствăна пурнăçлать.

Ытти комбайнерсем те аван ĕçлеççĕ. Орлов юлташ хăйĕн комбайнĕпе—265 гектар, Аверьянов—151 гектар тырă вырса пухнă.

А. КУРМАНИН,
Шăмăршă МТС директорĕ.

Кĕраки туса пĕтерчĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 28-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Тусай ялсоветĕнчи Ильич ячĕпе тăракан тата «Шимар» колхозсем тырăсене уйран йăлтах пухса кĕртрĕç, ĕнер кĕраки туса пĕтерчĕç. Ильич ячĕпе тăракан колхозра тырă вырса пухас ĕçре чылай колхозниксем кулленех ик-виçшер норма тултарса ĕçлерĕç. Колхозри чи паллă стахановка М. Григорьева юлташ çурлапа 0,44-шар гектар вырчĕ. 5—6 кун хушшинче вăл 40 ĕçкунĕ ытла турĕ.

«Шимар» колхозри çамрăк стахановец Геннадий Димитриев жнейкăпа 6—7-шер гектар вырнă. Ĕнер вăл юлашки тырра вырса пĕтерчĕ.

— Машина питĕ лайăх ĕçлерĕ, спасибă тимĕрçĕне,—терĕ вăл жнейкăна кӳлнĕ лашасене тăварса.

Кĕракинче «Шимар» колхозри стахановка М. Иванова юлташ кулленех икĕ гектар ытла сухаланă.

С. ШАДИН.

Шкул ачисемпе учительсем уйхир ĕçĕсенче

ОКТЯБРЬСКОЕ. **(Телефонпа).** Шкул ачисен отрячĕсем колхоз уйхирĕсенче мĕнпур вăйран тăрăшса ĕçлеççĕ. Утаçкасси, Карапаш, Кивĕ Тукай шкулĕсем пучах пухас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Утаçкасси шкулĕнче 3-мĕш класра вĕренекен Фаина Рискова звени (унта 11 ача) «20 лет Чувашии» колхоз хирĕнче кунсеренех 35 килограмм пучах пухать. Анатри Карапашри шкул ачисен отрячĕ (руководителĕ учительница Мартьянова) çак кунсенче 6,5 гектар тулă вырса пуçтарчĕ. Кив Тукай шкулĕнчи Петрова комсомолка ертсе пыракан отряд 12 гектар пăрçана алăпа çулса кĕртрĕ. Кудемер шкулĕнчи Т. Терентьева юлташ ертсе пыракан отряд августăн 1-мĕшĕ тĕлне 1149 ĕçкунĕ тунă. Хастарлă çамрăксем ир-ирех тухса сĕм тĕттĕмччен уйра ĕçлеççĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн çак отряда районри Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

А. ПЕТРОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Каникул вăхăтĕнче пионерсемпе шкул ачисем колхоз производствинче активлăн ĕçлеччĕр тесе, эпир 46 çĕрте ĕç отрячĕсем организацилерĕмĕр. Вĕсенче 953 вĕренекен, 46 учитель пĕрлешсе тăраççĕ. Çак отрядсем халиччен 22.652 ĕçкунĕ, аслă классенче вĕренекенсем уйрăмăн ĕçлесе 82.025 ĕçкунĕ тунă.

Уйрăмах Комсомольскинчи вăтам шкул ачисен отрячĕ (руководителĕ А. Павлов юлташ) кăтартуллăн ĕçлет. Унта пĕтĕмпе 22 ача. Вĕсенчен 7-шĕ эвакуаци йĕркипе куçса килнĕскерсем—пуçламĕш хут çурлапа тырă выраççĕ. Ку отрядра ĕç дисциплини çирĕп, çавăнпа унта пур ĕç те ăнăçлăн пулса пырать.

Районри учительсем, уйхирте тăрăшса ĕçлесе, шкул ачисене пример параççĕ. Уйрăмах Турачăкри вăтам шкул учителĕсене палăртмалла. 1-мĕш класс учительници А. Титова юлташ кунне 0,30 гектар вырать. П. Чернова учительница нормăна 200 процент тултарать. Кун пек тĕслĕхсем татах та пур. Районра учительсем каникул вăхăтĕнче 3.598 ĕçкунĕ тунă.

Ю. КОНОВАЛОВА,
Райçутĕç пайĕн заведующийĕ.

Тырпул хатĕрлемелли плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишĕн районсем хушшинче пуçланнă социализмлă ăмăрту августăн 25-мĕшĕ тĕлне мĕнле пынине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Сĕнтĕрвăрри	1
Етĕрне	2
Вăрнар	3
Октябрьски	4
Куславкка	5
Советски	6
Çĕрпӳ	7
Шупашкар	8
Вăрмар	9
Çĕмĕрле	10
Красноармейски	11
Сĕнтĕр	12
Йĕпреç	13
Комсомольски	14
Канаш	15
Первомайски	16
Калинински	17
Элĕк	18
Ишлей	19
Гăвай	20
Хĕрлĕ Чутай	21
Шăхасан	22
Улатăр	23
Елĕк	24
Чкаловски	25
Кувакино	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

Амăртура августăн 25-мĕшĕ тĕлне малти вырăна тухнă Сĕнтĕрвăрри районĕ государствăна тырă памалли çулталăкри плана 34,4 процент тултарнă.

Канашри Заготзерно пунктĕнче йĕркелĕх кирлĕ

Кулленех пункта темиçешер çĕр лав пырать. Колхозсем Тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен малтанхи тивĕçлĕхне хăвăртрах пурнăçлама тăрăшаççĕ. Чи малтан çапнă таса тырра государствăна параççĕ.

Анчах Канашри Заготзерно пунктĕнче тырă илес ĕçре йĕркелĕх çук. Пункт ирхине 8 сехетре ĕçлеме пуçлать те каçхине 9 сехетре хупăнать. Тырра икĕ çĕрте çеç йышăнаççĕ, весовщиксем, тырă тĕрĕслекен лаборантсем ĕçре кирлĕ хăвăртлăхпа çаврăнăçулăх кăтартмаççĕ. Çавна пула ирхине 3—4 сехетрех çитнĕ лавсем каç пуличчен те тырă парса тухаймаççĕ, тырă параймасăр тепĕр талăка юлнисем те тăтăшах пулаççĕ. «Красноармеец», Каганович ячĕпе тăракан колхозсенчен тырă тиесе пункта ирхине 3—4 сехет тĕлне çитнĕ. Кăнтăрла иртсен 4 сехетре çеç вĕсем тырă парса тухма пултарчĕç.

Тырă пама пынă колхозниксем валли пунктра культурăллă вырăн çук. Хĕрлĕ кĕтес малтан пулнă, халĕ унта пунктра ĕçлекенсем валли столовăй уçнă. Заготзерно пункчĕн директорĕ Тимофеев юлташ çак çитменлĕхсене пĕтерме тăрăшмасть.

В. ВЕСЕЛОВ.

Государствăна пахча-çимĕç типĕтсе параççĕ

ЙĔПРЕÇ. «Костер» колхозăн пахча-çимĕç бригади кăçал пахча-çимĕç нумай лартса ӳстерчĕ. 0,10 гектар çине акнă кишĕр питех те лайăх ӳсрĕ. Çуршар килограмм туртакан кишĕрсем питĕ нумай. Çак лаптăкрах сахалтан та 100—150 пăт кишĕр пуçтарса илме шутлаççĕ.

Çавăн пекех купăста тата хăяр та кăçал нумай пулчĕ. Купăста пуçĕсем халех 3—4-шар килограмм туртаççĕ.

Бригада государствăна хăяр парса татнă, çитес кунсенче купăста пама тытăнать. Государствăна пама пахча-çимĕç типĕтме тытăннă. Иртнĕ кунсенче бригада государствăна типĕтсе 4 килограмм сухан, 2,5 килограмм кишĕр пачĕ. Пахча-çимĕç бригадин бригадирĕ М. Чернышова юлташ государствăна пахча-çимĕçсем памалли обязательствăсене пурне те срокчен парса татма тăрăшать.

П. КУРАКОВ.

Молотилка шыв вăйĕпе ĕçлет

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Верный путь» колхозра икĕ шыв арманĕ пур. Кăçал вĕсене иккĕшне те юсаса ĕçе янă. Нумай пулмасть колхоз шыв вăйĕпе ĕçлеттерме пĕр молотилка вырнаçтарса лартрĕ. Халĕ молотилка лайăх ĕçлет. Çакна пула молотилка патĕнче ĕçлекен 8 лашана урăх çĕре куçарма май пулчĕ.

Заем укçине вăхăтра пухар

Хĕрлĕ Çар валли вăрçă техники, хĕçпăшалсем тата апат-çимĕçсем кирлĕ таран туса кăларма каякан укçатенкĕ хисепĕнче государство заемĕсен укçи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Совет ĕçсыннисем заем çырăнса панă укçа хамăр çĕршыва сыхлама кирлĕ танксем, самолетсем, хĕçпăшалсем тума каять. Кашни ĕçсынни çавна ялан асра тытса тăрать. Çавăнпа ĕнтĕ государствăн вăрçă вăхăтĕнче кăларнă заемĕсем хăвăрт саралаççĕ.

Кăçал совет правительстви Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне кăларни çинчен пĕлтернине совет ĕçсыннисем хапăл туса йышăнса, ăна çийĕнчех çырăнма пуçларĕç. Ку заем нихăçан пулман хăвăртлăхсемпе сарăлчĕ, пурĕ 12 миллиард тенкĕлĕх кăларнă пулсан, пĕр талăк хушшинче 14 миллиард та 561 миллион тенкĕлĕх сарнă.

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне çырăнас тĕлĕшпе пирĕн республикăри ĕçсыннисем те паха результатсем кăтартрĕç. Республикăра çĕнĕ заема 131 миллион та 854 пин тенкĕлĕх сарнă, заем укçине çийĕнчех 90 миллион та 845 пин тенкĕлĕх тӳленĕ. Республикăри 10 районри колхозниксемпе единоличниксем заем укçине çийĕнчех тӳлесе татнă. Заем укçине тӳлесси ытти нумай районсенче те ăнăçлăн пырать. Августăн 15-мĕшĕ тĕлне заем укçине тата 4 районра пухса пĕтернĕ.

Заем сарас тата ялсенче заем укçи пухас тĕлĕшпе Калинино, Вăрнар районĕсем малта пыраççĕ. Калинино районĕнче (сберкасса заведующийĕ Васильева юлташ) заема ăнăçлăн сарнă, колхозниксенчен заем укçи ку таранччен 6 миллион та 83 пин тенкĕ пухнă. Çапла, бюджетпа палăртнă хисепе 337,9 процент тултарнă. Кусемсĕр пуçне август уйăхĕнче заем облигацисем 122 пин тенкĕлĕх сутнă. Вăрнар районĕнче (сберкасса заведующийĕ Герасимова юлташ) колхозниксем хушшинче заем укçи 3 миллион та 41 пин тенкĕ пухнă, çапла бюджетпа палăртнă плана 168,9 процент тултарнă. Ишлей, Канаш, Красноармейски, Сĕнтĕр, Вăрмар, Елчĕк, Чкаловски районĕсенче те заем укçине пĕтĕмпех пухса пĕтернĕ.

Республикăри Сберкассăсенчи работниксем, Октябрь уявĕнчи ăмăртăва хутшăнса, ялсенче заем укçи пухас плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тата вкладсем явăçтарассине срокчен пурнăçа кĕртме пулнă. Нумай районсенче халĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртеççĕ. Калинино, Вăрнар, Красноармейски, Шупашкар тата ытти районсем виççĕмĕш кварталта вкладсем йышăнас плана иртерсе тултарнă, çавăн пекех колхозниксемпе единоличниксем хушшинче те заем укçи пухса пĕтернĕ.

Анчах Советски, Октябрьски, Комсомольски районсенче вкладсем йышăнасси юлса пырать. Пăрачкав районĕ (сберкасса заведующийĕ Новикова юлташ) виççĕмĕш кварталта заем укçи пухас плана августăн 15-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 7,2 процент çеç тултарнă. Партипе совет районри организацийĕсем заем укçи пухасси çавăн пек начар пынипе килешеççĕ пулас, вăл ĕçе хăвăртлатма мерăсем йышăнмаççĕ. Тăвай районĕнче те ĕçсем Пăрачкаври евĕрлех. Кувакино, Хĕрлĕ Чутай тата Етĕрне районĕсен те нихăш енĕпе те мухтанмалли çук.

Сберкассăсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх вăл—государство заемĕсем тытакансем хушшинче çителĕксĕр ĕçлени пулать. Заем облигацисене тĕрĕслесе тăрассине йĕркеллĕ организацилемен, справкăсем парас енĕпе ĕçлекен работниксене пулăшмаççĕ.

Заем укçи пухассине вăрăма хăварма нимĕнле сăлтав та çук. Финанс органĕсен тата сберкасса работникĕсен заем укçине вăхăтра пухмалла тăвас пулать.

А. МИХАЙЛОВ.

Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета Совет Правительстви йышăнни

Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет июнĕн 17-мĕшĕнче Совет Правительствине хăйĕн июнĕн 3-мĕшĕнче тунă декларацине тата хăйне йышăнасси çинчен çырнă çырăвне панă. Августăн 26-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ, Совет Правительстви хушнă тăрăх, француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета çапла пĕлтернĕ:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитетăн декларацийĕпе паллашнă хыççăн, Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет вăл Франци республикин государство интересĕсене сыхлакан тата гитлерла тиранипе кĕрешекен француз патриочĕсене ертсе пыракан пулса тăрать тесе шутласа, ăна йышăнма тата пĕр-пĕрин патне полномочнăй представительсем яма шут тытрĕ»

Англи, США тата Китай правительствисем Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета йышăнни

ЛОНДОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: августăн 26-мĕшĕнче Англи правительстви Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета меморандум панă, унта çав комитета Англи правительстви йышăнни çинчен каланă.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета США правительстви йышăнни çинчен Рузвельт тунă декларацие пичетлесе кăларнă.

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Китай Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитета йышăннă.

ГИММЛЕРА ГЕРМАНИН ШАЛТИ ĔÇСЕН МИНИСТРĔ ВЫРĂННЕ ЛАРТНИ ÇИНЧЕН АНГЛИ ПИЧЕЧĔ МĔН ÇЫРАТЬ

ЛОНДОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Гиммлера Германин шалти ĕçсен министрĕ вырăнне лартни çинчен çырса, Англи пичечĕ уйрăмах çакна палăртать: Гиммлера шалти ĕçсен министрĕ вырăнне лартни вăл тата хаяртарах террор туса Германири кирек мĕнле оппозицие те пусарса лартма тăрăшнинчен килнĕ. Рейтер агентстви çапла калать: Гиммлера ăна совет войскисем Харькова йышăнса илсен тата союзниксен авиацийĕ Берлина питĕ те вăйлăн тапăнсан темиçе сехетрен шалти ĕçсен министрĕ туса хунă.

Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Германин промышленноçлă районĕсенче забастовкăсем йышлăн сарăлса кайнă. Официальнăй йĕркепе тăвакан нимĕнле пропаганда та ĕнтĕ çынсене лăплантараймасть. Çынсене лăплантармашкăн хаяр террор кăна тăрса юлать.

«Таймс» хаçат та нимĕçсен шухăш-кăмăлĕ калама çук начарланса кайнине палăртать. Гиммлера шалти ĕçсен министрĕ вырăнне лартни вăл гитлеровецсем «иккĕленекенсемпе, мăкăртатакансемпе» питĕ хаяррăн кĕрешме шутланине пĕлтерет.

«Ньюс кроникл» хаçат шухăшĕпе, Германире администраци аппаратне питĕ вăйлăн тасатĕç, вара чи кирлĕ вырăнсене эсэсовецсене лартса тухĕç.

«Дейли мэйл» хаçат çапла çырать: Гиммлера шалти ĕçсен министрĕ вырăнне лартнине ăна вăтам ĕмĕрте пĕр-пĕр монарх хăйĕн тĕп пуçкасакане государствăра тĕп министр туса хунипе танлаштарма пулать, тет.

ДАНИ ХАЛĂХĔ ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕНЕ ХИРĔÇ КĔРЕШМЕ ÇĔКЛЕНЕТ

СТОКГОЛЬМ, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс тидннинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Данири Гельсингер портĕнче рабочисем хумханнă. Нимĕçсен Гельсингерти верфьре тăнă пароходĕ çинче бомба çурăлса кайнă. Çав взрыв вăл верфьри рабочисен забастовка пуçламаллине пĕлтерекен паллă пулса тăнă. Каярахпа Гельсингерте тата Вейлра пĕтĕмĕшле забастовка тунă. Рабочисем Данири ытти хуласенче те хумханаççĕ. Роскильдра чрезвычайнăй положени туса хунă. Копенгагенра трамвай çинче пассажирсем Данири пĕр фашиста вĕлернĕ.

«Нюа даглигт аллеханда» хаçат Силькеборг, Кольдинг тата Эсбьерг хулисенче диверсиллĕ ĕçсем туни çинчен пĕлтерет. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, августăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле 9 диверсиллĕ ĕç тунă, çав шутра самолетсен чаçĕсене тăвакан заводра, портра тата Клюстен фирмин радио оборудованийĕпе электричество хатĕрĕсем тăвакан пысăк заводĕнче диверсиллĕ ĕçсем тунă Скандинавири телеграф бюровĕ çапла пĕлтерет: августăн 24-мĕшĕнче Çурçĕр Югославире пĕр поезда тапăннă.

Пĕлтерӳ

Паян, августăн 29-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Н. К. Крупская ячĕпе тăракан садра лекци пулать. Лекци теми:

«Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру».

Лекцие ВКП(б) горкомĕн лекторĕ **Якерсон** юлташ вулать.

Билетсене сад кассинче сутаççĕ. Пухăннă укçа пĕтĕмĕшпех фашистсем çĕмĕрнĕ библиотекăсен фондне каять.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

АТĂЛ ТĂРĂХĔНЧИ МАКСИМ ГОРЬКИЙ ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН ЛЕСОТЕХНИКА ИНСТИТУЧĔ

1943—44-мĕш вĕренӳ çулĕ умĕн СТУДЕНТСЕМ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ. Вĕренме çак факультетсене илеççĕ: 1) инженерно-экономически, 2) лесохозяйственнăй тата 3) вăрман хатĕрлес ĕçпе вăрман транспортне механизацилеме вĕренмелли факультетсене.

Институтра 5 çул вĕренмелле.

1942-мĕшпе 1943-мĕш çулсенче тулли вăтам шкултан „отличник" аттестачĕпе е „хорошо" тата „отлично" паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Пушă вырăнсем юлсан, 1942-мĕшпе 1943-мĕш çулсенче тулли вăтам шкултан урăх паллăсемпе вĕренсе тухнисене те испытанисĕрех илме пултараççĕ.

1942-мĕш çулччен тулли вăтам шкултан вĕренсе тухнисем института кĕме çак предметсемпе испытани тытаççĕ.

1) ЛЕСОХОЗЯЙСТВЕННĂЙ ФАКУЛЬТЕТА кĕме вырăс чĕлхипе, литературăпа, физикăпа тата химипе.

2) ВĂРМАН ХАТĔРЛЕС ĔÇПЕ ВĂРМАН ТРАНСПОРТНЕ МЕХАНИЗАЦИЛЕМЕ ВĔРЕНМЕЛЛИ ФАКУЛЬТЕТА кĕме—математикăпа, физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе, литературăпа тата пĕр çĕнĕ чĕлхепе (акăлчан, француз е нимĕç чĕлхипе).

3) ИНЖЕНЕРНО-ЭКОНОМИЧЕСКИ ФАКУЛЬТЕТА кĕме математикăпа, географипе, СССР-ти халăхсен историйĕпе, вырăс чĕлхипе, литературăпа.

Института кĕме паракан заявленисене çак август уйăхĕн 25-мĕш числиччен илеççĕ. Вĕсене Институт директорĕ патне ямалла. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: вăтам шкул пĕтерни çинчен калакан подлиннăй аттестат, тĕплĕн çырнă автобиографи тата виçĕ фотоӳкерчĕк. Военнообязаннăйсем унсăр пуçне тата çар тĕлĕшпе мĕнле тăни çинчен справка хурса яраççĕ. Института пырсан, кашни хăй паспортне кăтартать.

Института кĕмелли испытанисем август уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕш числиччен пыраççĕ.

Вĕренме сентябрь уйăхĕн 1-мĕш числинче пуçлаççĕ.

Институт адресĕ çапла: Марийская АССР, Кожла-Сола, Звениговского района („34 км" Казанской жел. дор.).

ИНСТИТУТ ДИРЕКЦИЙĔ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

августăн 30-мĕшĕнчен пуçласа кунсеренех кинохроникăн ятарласа тунă

„ХАЛАХ ПРИГОВОРĔ"

ятлă кăларăмне кăтартать.

Ку кинохроникăра „Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем Краснодар хулипе Краснодар крайĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пулса иртнĕ суд процесне" кăтартнă.

Кинохроника хыççăн

„69-АЯ ПАРАЛЛЕЛЬ"

ятлă илемлĕ фильм кăтартаççĕ.

Сеанссем çак вăхăтра пулаççĕ: 10, 12, 14, 16, 18, 20, 22 тата 24 сехетре.

Ирхине 9 сехетрен пуçласа кăнтăрла 22 сехете çитиччен коллективсен заявкисене йышăнаççĕ.

Шупашкар Химлесхозне çак специальноçсемпе ĕçлекенсем кирлĕ: ст. бухгалтер, ларексенче сутакансем, хуçалăх заведующийĕ, платниксем, кăмака тăвакансем тата чернорабочисем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Аталăн сулахай енĕ, Сосновка поселокĕ, Химлесхоз.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Тĕп Хресчен Çуртне çакăн пек ĕçлекенсем кирлĕ: кĕçĕн регистраторсем, культработник, япаласем усракан камерăри дежурнăйсем, швейцарсем, гардеробщицăсем, техничкăсем, дезинфекторсем, кочегарсем, дворниксем.

Общежитире хваттер параççĕ.

Çак адреспа: Тĕп Хресчен Çуртĕн канцелярийĕнче ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Тĕп Хресчен Çурчĕ. 38-мĕш пӳлĕм. Телефонсем: 6—84, 5—43.

ШУПАШКАРТИ ПИР-АВĂР ФАБРИКИН ОРС-не çакăн пек работниксем кирлĕ: суту-илӳпе хатĕрлӳ секторĕн начальникĕ, план секторĕн начальникĕ, хатĕрлӳ инспекторĕ, делопроизводитель-машинистка, курьер-уборщица, агентсем, рабочисем, кладовщиксем, уборщица.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Володарский урамĕ, пичет çуртĕ, Шупашкарти пир-авăр фабрикин ОРС-ĕ. 3—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—89 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1813 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л